Культура ыйтăвĕсемпе

# Тепĕр чухне куракансем артистсенчен те сахалтарах

Москакасси Культура çурчĕ çумĕнче йĕркеленнĕ "Шуçăм" халăх юрăпа ташă ушкăнĕ юлашки вăхăтра хăйĕн илемлĕ юрри-ташшисемпе район çыннисене самаях савăнтарать. Акă, юлашки вăхăтра Вомпăкассинчи, Шомикри Культура çурчĕсенче пулчĕç. Чăнах килĕсене саланчĕç.

Шел пулин те, Культура çурчĕсене халăх сахалтарах тухни питĕ пăшăрхантарать. Сцена çинче 35-40 çын юрласа ташлать пулсан, залра вара 15-40 çын кăна пăхса ларать. Çакă кăмăла питех те хуçать. Мĕншĕн-ха эпир культура çине питĕ



сӳрĕккĕн пăхма пуçларăмăр? Мĕнрен е камран килет çакă? Шупашкара 100-150 тенкĕ тӳлесе "фанерăсене" пăхма каятпăр, укçана шеллеместпĕр. Анчах вырăнти чăн-чăн артистсене пăхма 20-30 тенкĕ укçа шеллетпĕр. Вырăнти культурăна аталантарма пулăшу параймастпăр. Çавăнпа та хăш чухне ялти артистсен кăмăлĕсем те хуçăлаççĕ.

Анчах эпир хамăрăн çунатсене усăнма памастпăр-ха, малаллах талпăнатпăр. Ял халăхĕ çакна ăнланасса шанатпăр.

та, ял халăхĕ коллектива тулли те ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕ. Кашни юрă-ташă хыççăн тăвăллăн алă çупса саламларĕ.

Концерта ертсе пыракан П. Лебедева вара чăн-чăн артист пекех тыткаларĕ хăйне. Ун шӳчĕсене итлесе ларакансем çăварĕсене те хупма пултараймарĕç.

Кашни юрăç илемлĕрен те илемлĕ юрăсене шăрантарчĕ. Акă вĕсем: И. Кораблева, Р. Олангина, О. Леонтьева, В. Голубев.

Ташă ушкăнĕ вара пурин чунне те тыкăнларĕ. Мĕн чухлĕ илемлĕ ташă кăтартмарĕç пулĕ И. Петрова ертсе пынипе. Кашни концерт хыççăнах ятарласа уçнă кĕнеке çине ял халăхĕ тав сăмахĕсем çырса хучĕ. Вĕсене çак пурнăçра пурăнма вăй-хăват панишĕн тав туса тулли кăмăлпа тухса

**Г. ГОЛУБЕВА,**
**Москакассинчи Культура çурчĕн директорĕ, Москакасси ял тăрăхĕн хĕрарăмсен Канашĕн председателĕ, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.**

Ыттисемшĕн ырă тĕслĕх

# Маттур хĕрача



Кристина Олеговна Павлова куç япăх куракансен республикăри ятарлă коррекци шкул-интернатĕнче вĕренет. Шкулта вара Кашмаш хĕрачи пултарулăхпа палăрса тăрать. Уроксем хыççăнхи пушă вăхăта пĕрре те ахаль ирттермест. Вун виçĕ çулхи хĕр ача кĕнеке нумай вулать, спорта кăмăллать, чылай мероприятие хутшăнма ĕлкĕрет.

Иртнĕ çулта иртернĕ инвалидсен зонăри ал-ĕç куравĕнче "Ӳсекен таланта" номинаци дипломне тивĕçрĕ. Унăн ĕçĕсене тивĕçлипех хакларĕç. Çапла вара Шупашкар хулинчи Наци музейĕнче иртнĕ республика куравне хутшăнма тивĕç пулчĕ.

Унăн татах тепĕр пысăк утăмĕ "Хăвăн тавракурăмна анлăлат" конкурса хутшăнни пулчĕ. ЧР Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерстви тата ЧР Культура, национальноçсен, информаци политикипе тата архив ĕçĕн министерстви йĕркеленĕ конкурсра пултарулăхне кура диплома тивĕçрĕ.

Муркаш районĕнчи куç курманнисен вырăнти организаци пӳлĕмĕнче Кристина ăсталанă ал ĕçĕсем илемлĕн курăнаççĕ. Ятарлă стенд çине вырнаçтарнăскер, пурне те тыткăнлать.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Кристина хăйĕн тусĕпе.**

Лайăх çынсем çинчен

Очерк

# "Тав сăмахĕ – чи хакли"

Çут çанталăк, тавралăх илемĕ, ял çумĕнчи ытарайми вăрмансемпе улăхсем, ан-карти хыçĕнчи куç пек тăрă çăл куç... Еплерех вырăнсем Лап Улкаш таврашĕнче! Çак ял хĕрĕ Нина, çут çанталăкăн иксĕлми илемне чунĕпе курма-туйма вĕренсе, вĕсене хăй çĕр çине килнĕ пĕрремĕш кунран юратса ӳснĕ.

1974 çул. Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкул. Çуллахи лăпкă та тӳлек ăшă каç. Сывлăшĕ таса та уçă. Шкула хирĕç вырнаçнă паркра шăпчăксен илĕртӳллĕ, çепĕç кĕвви илтĕнет. Шăпчăксен "тĕррисемпе" хутшăнса çамрăксен хавасла кулли, чуна тыткăнлакан "Шкул вальсĕ", "Шкул çулĕсем" янăраççĕ. Юлашки каç пĕрле çак шкулта 11 çул уйрăлмасăр вĕреннĕ çамрăксем. Директор кашнинех алă чăмăртаса, пурнăçра ăнăçу сунса, аттестатсем пачĕ. Юратнă учительсем пĕрин хыççăн тепри ăшă сăмахсем каларĕç...

Нинăна та çав каç аттестат пачĕç. Ăна алла илсенех çамрăк хĕр ĕмĕтĕнче çутă пуласлăх вĕлтлетсе илчĕ, вăл малалла вĕренсе çынсене, патшалăха усăллă çын пулма ĕмĕтленчĕ...

Нинăна ачаранах выльăх-чĕрлĕх илĕртнĕ: путексем, пăрусем, чăх-чĕп е кăвакал чĕпписем... Вăл вĕсемпе нумайчен "калаçма", вăхăт ирттерме пултарнă, вĕсене чунтан юратнă. Çак юрату çитĕннĕ хĕрте выльăх-чĕрлĕхе сиплекен тухтăр пулас ĕмĕте çирĕплетнĕ. Çак ĕмĕте пурнăçлас тĕллевпе вăл шкул пĕтернĕ çулах Хусанти ветеринари институтне вĕренме кĕчĕ те 1979 çулта алла диплом илсе тăван яла таврăнса "Сундырский" совхозра ветврач пулса ĕçлеме тытăнчĕ. Унтанпа кĕçех ĕнтĕ 28 çул çитет. Çак хушăра Нина Николаевна ытларах тăван хуçалăхра ĕçлерĕ пулсан, хальхи вăхăтра Мăн Сĕнтĕрти ветеринари лечебницине ертсе пырать.

Ачаран ĕç юратăвне мала хурса ӳснĕскерĕн кирек ăçта ĕçлесен те выльăх-чĕрлĕхе сиплесси, фермăсене çитсе, е ял ĕçченĕсене вăхăтра кирлĕ пулăшу парасси чи хакли пулнă. Ăна вăл паян кунччenex сыхласа хăварнă. Çамрăклах мăшăрне ĕмĕрлĕхех çухатни те, уншăн хуйхăрса сывлăхне хавшатни те çак ĕçе парăнса, чун-чĕререн юратса ĕçлеме чăрмантарайман.

... Мăн Сĕнтĕр ялĕ ыйхăна путнă. Тулли уйăх таврана хăйĕн ăшă паман шевлипе çутатать. Çанталăкĕ шăм-шака кăна мар, чуна чĕпĕтмелле сивĕ. Ялта йытă сасси те илтĕнмест. Тӳпере çăлтăрсем чĕтресе хĕмленеççĕ, пĕр-пĕрне куç хĕснĕ пек сӳнсе çуталаççĕ. Кĕпер çывăхĕнчи пĕверен юхакан Сĕнтĕр шывĕ пăсланса таврана çĕр ăшшине салатать, чарăнма пĕлмесĕр хăйĕн шывне Атăла хăвалать. Тавралăх шăп. Çак шăплăх, сивĕ пекех, чуна, шăм-шака çӳçентерет, тарăн шухăша ярать.

Акă, таврари шăплăха хускатса, таçта васкаса, юра кăчăртатса утнă сасă илтĕнсе кайрĕ. Ăçта васкать-ха çак çын ку сивĕре, çур çĕр тин çеç иртнĕ вăхăтра? Мĕнле нуша хăваласа тухнă-ши ăна? Кĕçех этем кĕпер урлă каçса чиркӳ урамĕпе тăвалла васкарĕ. Нина Николаевна пурăнакан çурт тĕлне çитсе хапха алăкĕнчен шаккарĕ. Кил хуçин йытти ют çынна хаяррăн вĕрсе "саламларĕ". Акă, кĕçех кил хуçи те вăранчĕ, çутă çутрĕ та алăкран: "Кам унта?" – тесе ыйтрĕ. Хыпăнса васкаса килнĕ хĕрарăм, кăштах чĕтрекен, куççулĕ витĕр тухакан сасăпа: "Нина Николаевна, чăрмантарнăшăн каçарăр. Ĕне пăрулаймарĕ", – терĕ те макăрса ячĕ. "Кăшт тăхтăр, эпĕ хатĕрленем-ха", – илтĕнчĕ кил хуçин сасси. Кĕçех икĕ хĕрарăм ялалла çул тытрĕç.

Тул çуталиччен тăрмашрĕ тухтăр ĕнепе пăрушкана çăлса хăварас тесе. Кун пеккине пайтах курнă ĕнтĕ вăл хăйĕн ĕçĕнче. "Ăçтан çитет-ши Нина Николаевнăн кăмăлĕ, чăтăмлăхĕ?", – теççĕ кунти таврари ял ĕçченĕсем вăл пурнăçлакан ĕçрен тĕлĕнсе. Мĕн чухлĕ тав сăмахĕ калаççĕ ăна вĕсем.

Чăн сăмахăн суйи çук. Чăнах та, çак ылтăн алăсем сахал мар пулăшнă ку таврари ял халăхне. Мĕн чухлĕ выльăх-чĕрлĕхе сыватнă пулĕ вăл. Хăйĕн ĕçне тĕплĕ пĕлекен специалист çĕрне-кунне пĕлмесĕр, çанталăка, канмалли куна е отпуска пăхмасăр ялан вăхăтра пулăшма васкать.

...Кун хыççăн кун иртет, çул хыççăн çул. Акă ывăлĕ те ӳссе каччă пулчĕ, Чăваш патшалăх университечĕн студенчĕ пулса тăчĕ. Хальлĕхе иккĕмĕш курсра вĕренекен Сергей юрист пулма ĕмĕтленет. Паллах, амăшне, пĕчченскере, çăмăл мар паянхи йывăр саманара ывăлне вĕрентме. Апла пулин те вăл пуçа усса лармасть, ветлечебницăра ответлăха туйса ĕçленипе пĕрлех килĕнче выльăх-чĕрлĕх усрать.

Халăха, çĕршыва усă тума вĕреннĕ хĕрӳ чĕре канăçа пĕлмест. Килĕнче те хĕрарăмăн ĕç нумай: пахчара-и, кăмака кукринче-и е витере – кашнинех вăхăтра пурнăçламалла. Пур çĕрте те çыпăçуллă унăн аллисем.

"Пурнăçра канăç кирлĕ мар", – тет Нина Николаевна Петрова ветеринари тухтăрĕ. – Çак канăççăр, халăха, çĕршыва кирлĕ ĕçе суйласа илнĕшĕн эпĕ нихăçан та ӳкĕнмен, ӳкĕнес те çук. Тав сăмахĕ илтетĕп те, ăна пысăка хурса йышăнатăп. Çынсен сăмахне тӳрре кăларассишĕн ĕçлетĕп".

Чăнах та, пурнăçланă ĕçшĕн халăх калакан тав сăмахĕсенчен хакли мĕн пултăр-ха тата?

**П. ВОРОБЬЕВ.**

**Мăн Сĕнтĕр сали.**

Çивĕч ыйтусем

# Зурабов ĕçне "иккĕ" паллăпа хакланă. Кăткăс ыйтăва "Пĕрлĕхлĕ Раççей" татса парĕ



**Çăмăллăхсемпе усă куракан граждансене хушма эмелсемпе тивĕçтерес ыйтăва юлхав политик çеç комментари памарĕ. Пурте килĕшеççĕ: эмелсемпе тивĕçтерессин кризисĕн тĕп сăлтавĕ – РФ Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви тата, чи малтанах, Михаил Зурабов министрăн хăйĕн çитменлĕхĕ. Хăш-пĕр парти çакăн пирки сăмах вакланипех çырлахрĕ пулсан, "Пĕрлĕхлĕ Раççей" вара асăннă ыйтăва татса пама çанă тавăрсах пуçăнчĕ.**

Хушма эмел мĕн чухлĕ кирлине Раççей министерстви малтан тĕрĕс те тĕплĕн палăртайман. Пĕр çын пуçне уйăхне 378 тенкĕлĕх эмел уйăрсан çитет тенĕ. Бюджетра шăпах çакăн чухлĕ укçа-тенкĕ пăхса хăварнă. Медицина тĕлĕшпе паракан соцпакета вара хаклă йышши эмелсем сывлăш пекех кирлĕ çынсем суйласа илнĕ. Çавна пула малтан уйăрнă укçа-тенкĕ çитмен. Çĕршыври хăш-пĕр парти çакăн пек лару-тăрура Раççейĕн асăннă министерствин отставкăна ярассишĕн кĕрленĕ вăхăтра "Пĕрлĕхлĕ Раççей" кăткăс лару-тăрăва тӳрлетме пуçăнчĕ.

Партин тĕп ĕçтăвкомĕ çумĕнче уйрăм категорири граждансене хушма эмелсемпе тивĕçтерме ятарлă ĕç ушкăнĕ туса хунă. "Пĕрлĕхлĕ Раççей" депутачĕсем тăрăшнипе Патшалăх Думинче ятарлă саккун йышăннă: хушма эмелпе тивĕçтерес тĕлĕшпе пуçтарăннă парăма саплаштарма тата 16 миллиард тенкĕ уйăрнă.

Кунсăр пуçне депутатсем Михаил Зурабов умне çирĕп тĕллев лартнă – унран кризисран тухмалли уçăмлă программа сĕнме ыйтнă. Ĕç тăвас вырăнне айăплисене шырамасăр. Ас тăватăр ĕнтĕ, М. Зурабов Росздравнадзор ертӳçине ĕçрен кăларса янă, çирĕплетнĕ лимита хăйсем тĕллĕн "ӳстернĕшĕн" регионсене сăмахлă тунă, çăмăллăхпа усă куракансем те, ун шучĕпе, эмелсене саппас валли хатĕрлесе хураççĕ, çавна май вĕсем çитмеççĕ...

Шел, Раççей Сывлăх сыхлавĕн министерстви хушнă-палăртнă ĕçсене пурнăçлайман. Юлашкинчен Зурабов министр ĕçне питĕ япăх хак панă.

Çивĕч калаçăва "Пĕрлĕхлĕ Раççей" партин ертӳçи Борис Грызлов, Патшалăх Думин Сывлăх сыхлавĕн комитечĕн председателĕ, "Пĕрлĕхлĕ Раççей" партин Генеральнăй канашĕн членĕ Татьяна Яковлева пĕтĕмлетнĕ.

Борис Грызлов палăртнă тăрăх, ку ыйтупа конкретлă ĕçсем кирлĕ, "министра ĕçрен хăтарасси пирки пуш параппан çапни çеç мар". Çав вăхăтрах Зурабов отставкăна ярас ыйту хальлĕхе таталман-ха. "Пĕрлĕхлĕ Раççей" ку ыйту патне таврăнма хатĕр, анчах та паянах мар – кризиса ирттерсе ярсан. Унсăрăн çĕнĕ министрăн пĕтĕм лару-тăрăва ăнланса илме вăхăт самаях кирлĕ пулать.

"Пĕрлĕхлĕ Раççей" хамăр çĕршыври медицина промышленноçне аталантарма ятарлă патшалăх политики сĕнет. Мĕншĕн тесен хушма эмелсемпе тивĕçтермелли программăна пурнăçланă чухне çакă палăрчĕ: бюджетран уйăрнă укçа-тенкĕн 80 проценчĕ ытла ют çĕршывсен эмелĕсемпе препарачĕсене туянма кайнă. Ку çакăнпа çыхăннă: йывăр чирсене сиплеме Раççей промышленноçĕ эмел хатĕрĕсем (инсулин, юна чармалли факторсем) халĕ пачах та кăлармасть. Кунпа çырлахма çук: темиçе çул каялла кăна çĕршыври фарминдустри антибиотиксем кăларас енĕпе тĕнчере малта пынă.

"Пĕрлĕхлĕ Раççей" депутачĕсен шучĕпе, çавăн пекех ФОМС (медицина страхованийĕн обязательнăй фончĕ) бюджетне ӳстермелле, социаллă çăмăллăхсем паракан "эмел пайне" те хăпартмалла. Гемофили, сахăр диабечĕ, склероз, онкологи чирĕсемпе асапланакансене, "единороссен" шучĕпе, федерацин уйрăм саккунĕпе хушма эмелсем илме майсем туса памалла.

**Хушма эмелпе, хатĕрпе тата препаратпа тивĕçтересси пирĕн республикăра мĕнлерех пулса пырать? Кун пирки каласа пама "Фармация" патшалăх унитарлă предприятийĕн ертӳçинчен, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутатĕнчен, "Пĕрлĕхлĕ Раççей" фракци членĕнчен Валерий Филимоновран ыйтрăмăр.**

– РФ Патшалăх Думинчи пирĕн фракци депутачĕсем çине тăрса тăрăшнипе çынсене кирлĕ эмелсемпе вăхăтра тивĕçтерес ыйту тинех вырăнтан тапранчĕ. Республикăра лару-тăру ака уйăхĕн пĕрремĕш вунă кунлăхĕнче кирлĕ шая лармалла. Урăх вăхăта тăснă рецептсемпе эмелпе тивĕçтерме 36 миллион тенкĕ ыйтса Мускава заявка ятăмăр. Ăна акан 1-мĕшĕччен куçарса пама шантарчĕç. Уйăх вĕçленнĕ тĕле вара яланхи кун йĕркипе ĕçлеме пуçлăпăр. Иртнĕ çулталăкăн çурринчи пекех лару-тăру ку енĕпе тăнăçлă пулĕ.

**– Валерий Николаевич, кăçалхи кризисăн сăлтавĕсем çапах та мĕнре? Хăвăрах каларăр: иртнĕ çул кун пек кăлтăксем пулман...**

– 2006 çулта Чăваш Ене çăмăллăхпа усă куракансем валли 510 миллион тенкĕлĕх эмел хатĕрĕсем уйăрнă, кăçал вара – 262,3 миллион çеç хăварнă. Хушма эмелпе тивĕçтерекен тытăмра вара хаклă йышши эмелсемпе сиплекенсем çеç тăрса юлнă. Вĕсене вара укça-тенкĕ ытларах кирлĕ, çын пуçне уйăхне 378 тенкĕ çителĕксĕр.

Çапла йышăнтăмăр: малтан палăртнă 21,3 миллион тенкĕ вырăнне уйăхне 37,0 миллион тенкĕ расхутлăпăр. Ку вăл пĕлтĕрхи шай чухлĕ пулĕ. Тĕрлĕ схемăпа усă курса тĕллеве пурнăçлама тата 160 миллион тенкĕ шыраса тупăпăр.

**– Урăх вăхăта тăснă рецептсене пула кам ытларах нушаланать?**

– Йывăр пулчĕ пулин те, сахăр диабечĕпе чирлекенсене эпир эмелпе пĕр чăрмавсăр тивĕçтерсе тăтăмăр. Чĕре тата онкологи чирĕсемпе аптракансен хальлĕхе кăштах çивĕч ыйтусем пур. Шанатпăр: çывăх вăхăтрах вĕсен ыйтăвĕсене те туллин тивĕçтерĕпĕр.

**Николай НИКОЛАЕВ.**